# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

66 (8930) № ✻ Юнкун, 2021 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Республикăра

## Вăтăр çултан иртнисен те май пур

*Хушма 100 пин çамрăкăн Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендине илме май пулĕ*

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев иртнерĕ Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче çамрăксен тата студентсен пултарулăх ăнтăлăвĕшĕн ятарлă стипендисем çинчен калакан Положение улшăнусем кĕртнĕ.

«Çамрăксен тата студентсен уйрăм пултарулăх ăнтăлăвĕшĕн ятарлă стипендисем çинчен» калакан Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 22-мĕш номерлĕ йышăнăвне «Патшалăх çамрăксен политики çинчен» калакан Чăваш Республикин 2021 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнчи 38-мĕш номерлĕ Саккунĕпе улшăнусем кĕртнĕ.

Ӳлĕмрен Чăваш Ен Пуçлăхĕн пултарулăх туртăмĕшĕн ятарлă стипендине 35 çула çитмен çамрăк çынсем те илме пултараççĕ. Çĕнĕ йĕркепе килĕшӳллĕн, 99967 çын – 31 çултан пуçласа 35 çулсенчи граждансем – хăйсен пултарулăхĕ пирки ĕç хучĕсене тăратма пултараççĕ.

Унччен маларах 30 çула çитменнисен тĕлĕшпе кăна çак йĕрке пулнă.

Кашни çулах 1000 çын стипенди илет, уйăхне 1830 тенкĕ тивĕçет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-службы.**

Çырăнтару – 2022

## Çитес çул илсе тăма

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2022 çулхи январьтен илсе тăма почта уйрăмĕсенче çырăнтараççĕ. Хаçата ултă уйăха çырăнмалли хак – 606 тенкĕ те 66 пус.**

**Редакци.**

Сентябрĕн 1-мĕшĕ – Пĕлӳ кунĕ

## «Школа каяс килет»



***Паян Муркаш районĕнчи 3 пин ытла ача парта хушшине ларчĕ. Вĕсенчен 358 ачашăн шăнкăрав сасси пĕрремĕш хут янăрарĕ. Çав ачасен йышĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Чуманкасси вăтам шкулне çӳреме тытăннă Сергей Захаров та пур. «Манăн школа каяс килет», – тет вăл хавас кăмăлпа. Аппăшĕсем пулăшнине туйнăран, вĕсен шкулти çитĕнĕвĕсене курса тăнăран пулĕ, хăйне çирĕп тытать çурăм хыçне çĕнĕ портфель çакнăскер. «Настя 2-мĕш класа, Юля 4-мĕшне каять кăçал», – пĕлтерчĕ аслăраххисем пирки шкул ачи. Виктория вара, çемьере ачасенчен чи асли, ку вĕренӳ çулĕнче шкулти юлашки шăнкăрава та астуса юлĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА** сăн ӳкерчĕкĕ.

Культура

## «Пушкин карттипе» тӳлевсĕр

**Чăваш Енри 12 культура учрежденине «Пушкин карттипе» çыхăнтараççĕ. Республикăра пурăнакан 14 çултан тытăнса 22 çулччченхи 105 ытла пин яшпа хĕр «Пушкин карттин» майĕпе усă курма пултарĕ. Çулталăк вĕçлениччен вĕсенчен кашниех культура мероприятийĕсене çӳреме 3 пин тенкĕ расхутлама пултарĕ.**

Кун пирки Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев 2021 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пĕтĕм Раççейри çамрăксем хушшинчи культура мероприятийĕсен «Пушкин картти» программине пурнăçа кĕртессин ыйтăвĕпе иртнерĕ канашлура пĕлтернĕ.

«Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн çĕнĕ пуçарăвĕ çынсене пулăшассипе çыхăннă – студентсене, çамрăксене Раççей Федерацийĕн бюджечĕ шучĕпе культура учрежденийĕсене çӳреме май туса панă. Çамрăксене çапла майпа пулăшни культура тата искусство отраслĕсемшĕн те питĕ пысăк тĕкĕ пулса тăрать. Студентсем, музейсемпе театрсенче тата ытти культура учрежденийĕсенче пулнă май, вĕсене укçатенкĕ тĕлĕшпе пулăшу кӳреççĕ, малалла аталанма май туса параççĕ», – палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

Чăваш Республикин культура, национальноç ĕçĕсен тата туризм ĕçĕн министрĕ Светлана Каликова пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Чăваш Енри 12 культура учрежденийĕ «PRO.Культура.РФ» порталта модернизаци тухнă.

Сывлăх сыхлавĕ

## Чăваш Ене вакцинăсем кӳрсе килнĕ

**Чăваш Ене коронавируса хирĕç тата грипп чирне хирĕç кĕрешме пулăшакан вакцинăсем илсе çитерне.**

Кун пирки регион Сывлăх сыхлав министерстви пĕлтерет.

Кăçалхи кĕркунне грипран прививка тăвасси ковидран хӳтĕлекен прививка кампанийĕпе пĕр вăхăтра иртет. Çавăнпа çак чирсенчен сыхлакан вакцинăсем пĕр вăхăтра килеççĕ. Иртнĕ канмалли кунсенче Чăваш Ене грипран 88 пин ытла доза «Флю-М» тата 22 пин ытла доза «Совигрипп» препаратсем килнĕ, çавăн пекех коронавирусран – 20 пин доза «Спутник Лайт».

Аса илтеретпĕр, унччен «Фармация» патшалăх предприяти складне грипа хирĕç кĕрешме пулăшакан ачасем валли «Ультрикс Кварди» вакцина 73 пин ытла доза тата аслисем валли «Совигрипп» вакцина 110 пин ытла доза кӳрсе килнĕ.

Ведомствăра палăртнă тăрăх, грипран прививка тăвассинче çак йĕркене пăхăнмалла: коронавирусран вакцинăн иккĕмĕш компоненчĕпе прививка тунă хыççăн (прививка тăвассине туллин вĕçленĕ хыççăн) пĕр уйăхран сахал мар вăхăт иртмелле. Çак тапхăр организмра антитела йĕркелене çитме кирлĕ.

**Чăвашинформ ИА.**

Çĕршывра

## Сентябрь çĕнĕлĕхпе пуян

***Кĕркуннен пĕрремĕш уйăхĕнче чылай çĕнĕлĕх пурнăçа кĕрет. Вĕсенчен ытларахăшĕ сывлăх сыхлавне тата суту-илĕве пырса тивет.***

Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен **«гараж амнистийĕ» старт илет.** Гараж харпăрçисем гараж вырнаçнă çĕр участокне тӳлевсĕр регистрацилеме пултараççĕ. Хальхи вăхăтра Раççейре кун пек 5,6 млн сооружение кадастр учетне кĕртнĕ, анчах та харпăрлăх правине 3,6 млн гараж тĕлĕшпе кăна çирĕплетнĕ.

Çичĕ çулччченхи ача чирленине пула больничнăй илнĕшĕн ашшĕне е амăшне малашне **ĕç стажне пăхмасăрах ĕç укçин вăтам виçи чухлĕ тӳлеççĕ.** Унччен ку виçеллĕ больничнăй тӳлевне пĕр вырăнта 8 е ытларах çул ĕçленисем кăна тивĕçме пултарнă. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ача ăçта сипленни те (е килте, е больницăра) пĕлтерĕшлĕ пулмасть.

Сентябрьте ковид-19 чиртен вакцинаци тунисен йышĕнче **лотерея выляттарма пуçлаççĕ.** Çĕнтерӳçĕсене 100-шер пин тенкĕ параççĕ. Вакцинациленнĕ çынсем унта автоматла йĕркепе хутшăнаççĕ: даннăйсене вакцинациленнĕ çынсен пĕрлехи реестрĕнчен илеççĕ.

**Эмеле киле çитерсе парасси ансатланать.** Аптекăсемпе килĕшӳ тунă пысăк мар аптекăсем, маркетплейссем рецептсăр сутма юракан эмел препарачĕсене малашне хăйсен сайчĕсем е интернет-агрегаторсем урлă сутма пултараççĕ. Унччен кун пек майпа вунă е ытларах филиал тытса тăракан пысăк сеть аптекисем кăна усă курма пултарнă. Онлайн мелпе туяннă чухне эмел препарачĕсен хакĕ аптекăринчен хаклă пулмалла мар. Кунпа пĕрлех фармкомпанисем хăйсен продукцине партнерĕсем урлă сутаççĕ пулсан та, ăна урăх курьерсем çитерсе параççĕ пулсан та, эмел препарачĕсен пахалăхĕшĕн ответлă пулса юлаççĕ.

Евразия экономика союзĕнчи çĕршывсенчен Раççее çывăх тăванĕсем патне **вăхăтлăх е транзитпа килекенсен визине çулталăк таран тăсаççĕ.** Вĕсен ПЦР-тест результачĕсене çирĕплетекен справка пулни те пĕлтерĕшлĕ мар.

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче «хаксен стабилизацийĕ» пирки калакан килĕшӳ пăрахăçланать. Çавна май октябрьтен тытăнса тип çу туса кăларакансене тата суту-илӳ сечĕсене хальхи хаксене тытса тăма йывăртарах. Çавăнпа сентябрĕн 1-мĕшĕнчен влаçсем **тип çу хакне тытса тăрас тĕллевпе** экспорт пошлинине вăя кĕртеççĕ. Вăл 70 процентпа танлашĕ.

Нумай вăхăт упранакан (40 тата ытларах кун) **сĕт продукчĕсен обязательнăй йĕркепе маркировка пулмалла.** Маркировка пулни продукци пахалăхĕпе çыхăннă: маркировка продукт туса кăлараканран пуçласа суту-илӳ центрне çитнĕ «çула» кăтартса парать. Июнĕн 1-мĕшĕнчен кун пек маркировка мороженăй тата сыр çинче пур ĕнтĕ. Çитес çултан кĕленчери таса шыва та маркировка тума тытăнĕç.

**Улма-çырларан тунă эрехĕн, иçĕмрен тунисĕр пуçне, ячĕ улшăнать** – сентябрь пуçламăшĕнчен тытăнса кĕленче çинчи этикетка çинче «плодовая алкогольная продукция» тесе çырма тытăнаççĕ. Çапла вара улма-çырларан эрех туса кăларакансем ку таранччен туса кăларнă эрехе октябрь уйăхĕчен сутса пĕтерме тивĕç. Ваккăн суту-илӳ тăвакан центрсенче вăл çак çулталăк вĕçлениччен кăна пулмалла.

**Информаци агентствисен материалĕсем тăрăх.**